„Канаш“ хаҫат ҫумӗнҁе тухаҭ.

# КАПКӐН

14-мӗш №

Ийулшӗн, 1927 ҫ. 3-мӗш ҫул тухаҭ.

## Пӳрократ сыхлӑх ернинҁе.



— Саветуйушҁи йулташ, Ҁемперлена ответ пама ыйтаҫҫӗ! Кӑпинетах кӗртеси вӗсене?

— Ответ памалла? Ҫырса хатӗрлӗр малтан. Исхоҭашҁи номӗрне лартма ан манӑр. Ыран ал пусса йарӑпӑр.

# Симĕс карттуслă çынсем.

Анатран килекен пăрахут тутă вăкăр пек мĕкĕрсе илҫĕ те, Шупашкар пристăнне пырса ҫарăнҫĕ. Прахут çинҫен тухакансемпе пĕрле икĕ симĕс карттуслă çын тухрĕç те, çырла сутса ларакан майрасем хушшипе иртсе, пусма тăрăх хула хушшинелле хăпарса карĕç. Шупашкар урамĕсем тăрăх кунĕ-кунĕпе ĕçсĕр аптраса поттинккă кĕлисене йакатса çӳрекен мешҫенккăсем симĕс карттуслă çынсене курсан:

— Пăх-ха, пăх, Шуркка, çаксем студентсем килҫĕç пулас. Каçпа пуҫвара тухĕçши вĕсем, ах паллашасҫĕ вĕсемпе, тесе илҫĕç.

Тимĕр шиптсăпа кăтралатнă çӳç ункисем айĕнҫен тăватă хура куç студентсем курăнми пулиҫҫенех, вĕсен çурăмĕсем çинҫен вĕçернмерĕç. Курăнми пулсан сăрланă тута хĕррисем тем çинҫен мăкăлтатса илсе йăл кулҫĕç. Студентсен пайан хĕрсен куçĕсене пахаласа тăма вăхăт çук. Сăрт çине хăпарса çитсенех иккĕшĕ икĕ çулпа пĕрпĕрне ырă сунса уҫрештенисем тăрăх практĕк вырăнне шырама карĕç. Иакку йатли, йалхуçайстви шкулĕнҫе вĕренне майĕпе Çĕр Комиссариаҫĕ йеннелле утрĕ. Виктăр йатли технĕккă шкулĕнҫе вĕренет, вăл çавăнпа хăйне кирлĕ уҫрештенисене утгарҫĕ.

Виктăр вырăн тупаймасран ним хăрамасăрах утат—унăн пĕр уҫрештенире пуçлăхĕ лайăх паллană çын пулнă мĕн. Вĕçтерсе çитрĕ... анҫах... ак, хуçăк кĕвенте!—Паллană пуçлăха тахçанах вĕри хĕвелпе пĕçертме Туркестана йанă. Виктăрăн ҫунне ҫăмăртаса ахалех тепĕр уҫрештенийе тухса каймалла пулҫĕ. Пыҫĕ тепĕр уҫрештенийе.

— Стравствуйте, тет Виктăр пуçлăх патне кĕрсе. Хирĕç ҫĕнекен çук. Çтенасем те пулсан илтсе йулҫҫăр, тесе Виктăр тепĕр хут сторовă турĕ те:—Епĕ çапла, çапла практĕкке...

— Товариш, по еттому вопросу опраттиттĕç в Наркомпрос, тесе хуҫĕ кахал ҫĕлхе хăй пуçлăхĕн çăварĕнҫен вĕçне кăшт кăртса.

Карĕ Виктăр Çут Комиссариатне. Кусем Ĕç Комиссариатне йаҫĕç. Ĕç Комиссариаҫĕ каллех паçăрхи çĕре йаҫĕ. Кунтан каллех Çут Комиссариатне... Ĕç Комиссариатне... каллех... Ик-виç кун вĕçсĕр унка тавра ҫупсан Виктăра ваҫҫи Сывлăх Комиссариаҫĕнҫе аран пĕр штăтăк тупăнҫĕ. Кунтисем:—Есĕ технĕккă шкулĕнҫе вĕренетĕн, пире санашкал çын кирлĕ мар, тесе тăмарĕç. Айта, лар, ак сана ĕç. Пирĕн шур хут нумай, çыр та çыр. Телопроисвотиттĕл шутĕнҫе пурăн, терĕç.

Виктăр, прахут çинҫе ларса килнĕ ҫух та, Хусан саҫĕсенҫе хĕрсемпе пушă кăсийсене икĕ аллине ҫиксе çӳренĕ ҫух та, кунашкал вырăна кĕрес тесе нихăçан та шутламанҫĕ. Рапфакра вĕреннĕ ҫухнех:

— Ак, рапфак хыççăн политтехниҫҫески институт пĕтерсе тухатăп та, сахалтан техниҫҫески тиректăр пулап, тесе хавасланса çӳреҫҫĕ.

Тиректăр пуласса шансах пулас, Хусана вĕренме кĕрсен тепĕр куннех симĕс карттус туйанса йаҫĕ.

— Ех!... ҫорт восми... мĕн майĕ пурха вăл, манашкал кирлĕ çынран кунта усă курса йулма пĕлмеççĕ вĕт, тет Виктăр йаланах симĕс картус айĕнҫи пуçне хыçса.

Халĕ Виктăр хăнăхса çитрĕ. Уҫрештеннире ĕç çителĕклĕ мар пирки, саҫатти вăхăтĕнҫех пасара тухаť те, пĕр 800 крам хăмла çырли çимесĕр тавăрăнмасť. Каçпа кашни кунах пуҫвар тăршшĕне виçет, анҫах нийепле те виççе çитерейместь. Пуҫвар тăршшĕ Виктăр ăсăнҫен вăрăмрах пулнă мĕн.

Малтанах Виктăр çине кăтралатнă çӳç айĕнҫи хура куççем питĕ йăвашăн пăхаҫĕç. Халĕ телопроисвотиттĕлте пурăннине пĕлсен, Виктăра асăрхами пулҫĕç. Виктăр куншăн пуçне усса çӳреместь: çавах хăçанта пулсан сахалтан техниҫҫески тиректăр пулатпăр, вĕт, тет.

* * *

Йакку Шупашкарта Виктăр çулĕсемпех ик-виç кун ҫупса çӳресен ывăнса тепĕр хулана карĕ. Ку хулара та вырăн çук.

Хула тесе песприсорни толшнăçĕнҫе пурăнмалла мар вет,—каймалла пулҫĕ Иаккун йалах. Иакку апшĕсем наҫарах пурăнакан çынсем мар.

# Йалти пӗве.



**— Ку пӗвере пулӑ нумай пулмалла.**

**— Ма?**

**— Ара, пӗвинђен пулӑ шӑрши керет,—хамӑрӑн копператтиври пулӑ шӑрши... Ой, шӑршлӑҫке! Сӑмсана витӗрех ҫурат̆.**

---

— Ну амӗшӗ... ӑҫта ҫав пирӗн нӳхрепре сӑра йулни, илсе кил, Иакку килнӗ йађӗпе кӑшт ӗҫес, терӗ Иакку ашшӗ. Сӗтел ҫине сӑра витри ҫумне симӗсси те тухса ларђӗ. Ђӗлхе-ҫӑвар ҫемҫелеђђен ӗҫсен, Иакку йал хушшинелле карӗ.

Йалти ҫынсем Иакку карттусӗ ҫине, хура шалаварӗ айӗнђен курӑнакан шӗвӗр пушмакӗ ҫине пӑхса:—

— Пӑхӑр-ха есӗр Иакку ҫине, йалтан кайни нумай та пулмаст̆, мӗнле капӑр тумланса килнӗ вӑл, теҫҫӗ. Иакку студент йађӗ ҫӗресрен хӑраса ҫынсемпе питех калаҫмаст̆.

Тепӗр кунне Иакку йыснӑшсене курма карӗ. Унтан куккӑшсем патне, унтан акӑшсем... йулташсем патне. Хурӑнташӗсем патӗнђе пӗр ерне йахӑн ҫӳресе иртерсен:

— Ну, урӑх кунашкал ҫӳреме йурамаст̆, йалта ӗҫлес пулат̆, терӗ Иаккун пуҫ мими.

Пӗр каҫ Иакку шур хут илет те ҫырат̆: Иалсоветне. Ыран 12 сехетре пуху пухса парӑр, токлат туса парап, тет. Тепӗр кунне 10 сехетре ҫывӑрса тӑђӗ те, пӗр ҫур сехет йакалкаласан, тӳрех хурал патне утрӗ.

Пӑхат̆—никам та ҫук. Кӗтет—ҫук. Хурал патӗнђен пӗр кӳршӗ ҫынни иртсе кайнине курђӗ те:—Йӑван Митриђ, халӑх мӗншӗн пухӑнмаст̆ ара пайан, тесе ыйтат̆.

Йӑван Митриђ, темшӗн сухал айӗнђи тутине ђалӑшӑн пӑрса илђӗ те:—ара пайан пурте ирех утӑ ҫине кайнӑ вӗт, терӗ.

ВАҪҪИЛИЙӖВ П.

## Ваҫук такмакӗсем.



Ианрах кармоҫ, хыт йанра,
Ес хаҫ уллах пуҫӗ.
Тимкка Ваҫи санпала
Ҫӑн уллаха уҫӗ.
Малтан наҫҫом хамӑртан
Молотошлӑ пултӑр;
Иунӑшӗски шӑлтӑрма
Уллаха тӑк тултӑр.
Иатӑм раҫшӗ пыл Ио-а-а-н
Хрансус пыл тӑк Шан-ҫҫӗ,
Комрат йухнӑ хытхуран
Как леш ҫеҫпӗл шаннӑҫҫӗ.
Тӗштырпи хаҫ, Тӗштырпи
Еп комсомол ҫынӗ,
Во всом мире тӑван тин
Пролеттарски теҫис.
Тӗштырпи еп, Тӗштырпи
Ҫӑваш комсомолӗсӗ,
Кив кункрарах выртӑпи,
Ҫумра Ленин лосӑнкӗ.
Телӑ пылӑ в Октапре,
Пылӑ ой каккойски:
Тӗпех пултӑр покрӗпре
Пыл катки паршуйски.
Ҫӗнтертӗмӗр пуршуйиа,
Вӑрҫнӑ кӑпитталпа,
Хаҫ о пылом спойу йа
Калап кармоҫпала.
Тӗштырпи еп, Тӗштырпи
Типтӗм Тимкка ывӑлӗ,
Кив кункрарах выртӑпи
Манӑн пашка сыв вӗт.
Ни вырӑс еп, ни ҫӑваш
Хама хам неснайски,
Ие ураххӑл, йе йӑваш
Микул тур пыл снамӗнски.
Типтӗм Тимкки тикки пул,
Неснай как порнаххӑл.
Ырҫын кулнӑ, кулнӑ пуп,
Иапӑлт улталаххӑл.
Саплаткӑм ҫеҫ пурнӑҫу
Мӑнтӑрсен пиншакӗшӗн;
Хайсем тӑрӑх йухат ҫу,
Татах йун ҫӑтасшӑн.
Тинкӗл-танкӑл ҫан ҫапса
Пӑхӑнтарат пупӗ;
Упаленсе пуҫ-ҫапса
Аллӑма ҫуп-ту, тет.
Киреметпе турӑ пӗр,
Тири-тири! там-там!
Текех ҫирке ҫӳрӗпи?—
Ҫӳремӗп нихҫан та!
Ай-йай! поҫнӑ йывӑрҫ шиҫнӗ
Выртсах та, уллаххӑл;
Ҫапах каҫпа кӗрт йыттин
Йӑрт-йӑрт! и... по уллаххӑм!..
Улахсем те халӗ ҫӗнӗ
Вӗрҫӗнехҫке шухӗш те,
Хӗвеланӑҫ йепле хӗрлӗ,
Хӗп-хӗрлехҫке тухӗҫ те...

ВАҪАНККА.

---

## Ратнисене хывнӑ.

**Уҫитлӗ**: Сан ывӑлу пит наҫар вӗренет. Шкулта нимӗн те тӑвасшӑн мар.

**Хула ҫынни**: Амӗш ратнине хывнӑ пуҫ. Амӗш ратнисем пурте уҫрештенисене кӗрсе пӗтнӗ. Ӗҫлеме йуратмаҫҫӗ, нимӗн те тӑвасшӑн мар.

# Кӗпӗрнере отђот туни.

Вулӗçтӑвком претçетаттӗлӗ—самӑрскер, ђейескер уç тупанӗпе хутсем çине çат çапса мӑкӑртатса илнӗ:

— Кӗпӗрнене кайас пулат̆. Отђот тумалла.

— Но?—тӗлӗнсе кайнӑ çекреттар.

— Ак, сана но! Пирӗн, вӗт... çур çул хушшинђе совет ӗçӗсене ӗçлеме ал та пыраймарӗ. Елӗк ӗçленипе пурӑнатпӑр... Усалли пулӗ вӑл,—ђӗрнесене хыйпӑтсах илӗç, тенӗ претçетаттӗл.

— Сана-и?—тӗлӗнсе кайнӑ çекреттар.—Халиђђен пулман йапала. Отђотне тума есӗ пӗлетӗн. «Иусанат̆», «сарӑлса пырат̆», тетӗн унта. Пӗлнӗ ӗç вӗт.

— Ухмах ес,—тет претçетаттӗл çилленсе.—Пӗлнӗ ӗç пирки хӑрамалла çав. Халӗ ӗнтӗ ӗлӗкхи пек мар, «ӗçсем йусанса пыраççӗ» тесен, такам та: кусем нимӗн те туман иккен, тесе шухӑшласа илӗ. Тӑнлантӑни?

Çекреттар сурђӑкне çӑтса:

— Ђӑнах та-çке! Мӗнле тӑвӑн вара апла?—тет.

— А-а! Хӑрамаллийех çук,—терӗ претçетаттӗл çамкине тӑват пӳрнипе çапса илсе,—Ахалтен мар Керманӊ вӑрçинђе унтӗр-офитсер пулса куртӑм. Епӗ пуçлӑхсене вӑрçӑри пек инçетрен савӑрса илем, тенӗ.

* * *

Кӗпӗрнери ӗçтӑвком претçетаттӗлӗ кӑпинетӗнђе кӗпӗрнери влаçсем, тата вулӗçтӑвком претçетаттӗлӗ ларнӑ.

— Ну, йурӗ, тенӗ кӗпӗçтӑвком претçетаттӗлӗ.—Хӑвӑр ӗçсем çинђен тӗпӗйӗрӗпе отђот тума йӑвӑр пулсан, ыйтусенђен пуçлӑпӑр. Мӗнле сирӗн тоххотпа расхут? Хӑвӑра-хӑвӑр сиплешсе пыраттӑри?

Вулӗçтӑвком претçетаттӗлӗ мӗскӗнӗн сывлаха илсе аллипе сулнӑ:

— Ӑçтан сиплешетӗн? Пирӗн вулӑсра сиплешмеллине тупаймӑн ӗнтӗ. Кӳршӗри вулӑссен маçтерскойсем пур, ӗне ђуптармалли, кирпӗђ савӑђӗсем. Пирӗн... алсем лаштах кайаççӗ. Пӗр арман пур та, вӑл та пулин кулак аллинђе,—кулака тара панӑ.

— Нађар. Мӗнле сирӗн вулӑсра çулйӗрсем?

— Çулсеми? Çулсем çук. Епӗ претçетаттӗле кӗни нумайах пулмаст̆ те, мӗншӗн апла пулнине пӗлместӗп,— çулсем çук. Çӳреме йурӑхсӑра тухнӑ çулсем пур вара. Çулсемпе кӑн тухнӑ ӗнтӗ: пӗр йала та пырса кӗмелле мар. Претçетаттӗлтен тухса тарас патнех çитрӗм.

— Апла еппин. Пире сирӗн вулӑсри çулсем лайӑх тесе пӗлтернӗђђӗ ӗлӗк.

— Лайӑх? Хе-хе! Кам сире суйрӗ? Ӗлӗкхи претçетаттӗли? Хӗллехи çинђен каланӑ пуђ вӑл? Хе-хе! Хӗлле пур çулсем те лайӑх. Ун ђухне кӗперсем те кирлӗ мар.

— Нађар, нађар! Ну халӗ ӗнтӗ шкулсем çинђен ыйтатпӑр. Шкулсем те шӑтса кайнӑ пуђ сирӗн апла?

Вулӗçтӑвком претçетаттӗл ик аллине сулса

— Суйма пултараймастӑп. Шӑтса кайни нимех те марха вӑл. Вӑл ниђево. Витмесӗр лараççӗ, крышшисем çук! Претçетаттӗлтен тухса тармалла!

* * *

Кайалла вулӑса вулӗçтӑвком претçетаттӗлӗ савӑнса таврӑннӑ.

— Ну, мӗнле?—тесе ыйтнӑ çекреттар.

— Çаплах!—тенӗ претçетаттӗл, савӑннипе пӗççине шарт çапса илнӗ.

— Ах, мат̆ ђеснайа! Вӗсем мана: ӗçсем йатламалла мар, теççӗ. Епӗ вӗсене: мӗнле йатламалла мар, çакӑнса вилес патнех çитрӗм, пӗтӗмпех çӗнӗрен тумалла, терӗм. Çав тери суйрӑм, кӗпӗрнери претçетаттӗл, кӑмӑлӗ хуçӑлса кайнипе: пит хавас сан пек тӳрӗ çынпа калаçма. Пӗр пытармасӑрах каларӑн. Хӑвӑрӑн çитменлӗхсем пуррине пӗлсе тӑни аван йапала вӑл. Тӑрӑш çулталӑк вӗçӗнђе хам пырса пӑхӑп сирӗн вулӑса, терӗ.

— Тата мӗн?

— Пӗтрӗ ӗнтӗ. Килтӗр. Пирӗн, вӗт ӗçсем ытла нађарах мар. Çынсенђен нађартарах та, анђах питех нађар марха. Килсен: кусем ӗçленӗ, çавӑнпа кашни кун туса пымалли вак ӗçсем йапӑха тухса йулнӑ, тет анђах. Тӑнлантӑни? Вӑт мӗнле ђейе епӗ! Çӳлтисем пире хисеплеççӗ, саваççӗ, вак-тӗвек ӗçсене ӗçлеме те кирлӗ мар.

ПРОКОФЙЕВ (ывӑлӗ).

# Платник йатне илтни.

Ку йапала тĕрĕс пулнă. Тĕрĕсси Хветĕр сăмахĕнҫенех паллă, Терентисен Хветĕрĕ сăмахĕнҫен. Вăл хăй каласа кăтартрĕ мана ун ҫинҫен.

Ак мĕнле каларĕ вăл:

Вăт, есĕр хулара тислĕк тасатни ҫинҫен каларăр. Телей пулмасан тислĕк тасатма мар, платник та пулаймăн.

Платник пулса пăхнă епĕ те. Нимех те ҫук вăл ĕҫре. Сурмалли ĕҫ анҫах вăл. Йăрунта!

Конешнă, тарăнрах шухăшласа пăхсассăн, платник ĕҫĕнҫе те кăмăла кайакан йапаласем тупăнаҫҫĕ. Ҫурт тăрне хăпарса кайатăн унта, турпассем вĕҫеҫҫĕ, хĕрарăмсем турпас пуҫтарса ҫӳреҫҫĕ, санăн тислĕкне пухнăннах туйанаĭ вара. Ҫыннисем хисеплеҫҫĕ сана, пăрмис вырăннех хураҫҫĕ... Кулмалла!..

Епĕр иртнĕ ҫура, конешнă, Ҫитăрпала иксĕмĕр платнике (каскалама) вĕренме тумăĭ турăмăр. Анҫах икĕ пĕлмен,—иксĕмĕр те платник йĕркине пĕлместпĕр. Ҫитăр та хăй арăмĕ ҫухлĕ анҫах пĕлет платник ĕҫне, ĕпе те хам арăм ҫухлĕ анҫах пĕлетĕп. Платникре ĕҫлемелли хатĕрсен йаҫĕсене те наисуҫ пĕлеймĕстпĕр.

Пĕре тумăĭ тунă ĕҫе пăрахас килмест. Пасарта пĕр платник майлă ҫынна тупрăмăр. Ырханкка, унтан та кунтан пăт-пат шăтса кайнă сухал, ҫĕтĕкрех кĕпе,—пурте платникăн. Ҫĕлхине ҫемҫетме ерех ĕҫтертĕмĕр те, вăл пире платник ĕҫĕ ҫинҫен пĕр вăтанмасăрах каласа паҫĕ. Савапа саваланă ҫухне, йĕмӳсене ан ҫĕтĕр, терĕ йулашкинҫен. Аван ҫын. Хамăра кăна мар, пирĕн йĕмсене те хĕрхенет.

Хулана кайса платник хатĕрĕсем туйанса килтĕмĕр. Пурăнатпăр, пурăнатпăр—пире платнике ҫĕнмеҫҫĕ.

Ҫитăр каларĕ:

— Капла мар епĕр. Ирĕке кайар. Ирĕкре ĕҫ тупма пулаĭ, терĕ.

Тепĕр виҫĕ кунтан, арăмсем пиллесе йанипе, Кĕнер тенĕ ҫĕрелле тухса карăмăр. Иалсоветран „Ҫитăрпа Хветĕр (Хветĕрĕ епĕ ĕнтĕ) ҫуралнăранпах платник ĕҫĕпе пурăнаҫҫĕ“, тесе ҫырнă хут илес терĕмĕр. Памарĕҫ. Ара куштансем кĕрсе ларнă та йалсовета, ҫухăнсене ĕҫ тупса парасси ҫинҫен шухăшламаҫҫĕ те.

Ҫитрĕмĕр пĕр йала. Ман Ҫитăр кама курнă ăна:

— Камăн мĕн ĕҫ пур. Платниксем епĕр. Пурне те тума пултаратпăр, тет.

— Ҫук, теҫҫĕ.

Пĕрри:

— Лаша вăррисем мари есĕр, тесе ыйтрĕ.

Кулса каларĕ пуҫ, терĕмĕр. Ҫапла!.. Епĕ савăннипе нимĕн калаçма та пĕлместĕп. Платник йатне тин илтрĕмĕриҫ, тетĕп.

Ку йалта ĕҫ тупаймарăмăр. Те пĕлмен платник йатне хураҫҫĕ пире,—соломон йарса пăхнă пулсан пĕлнĕ пулăттăмăр та, ун ҫухнех ăша кĕмерĕ,—тем пирки ĕҫĕ тупăнаймарĕ. Тата тепĕр йала ҫитрĕмĕр. Кунта, воспоти плакослови, йала кĕрсенех пĕр ҫынран платник кирли тесе ыйтрăмăр та, вăл —пур, терĕ.

Вара вырнаҫрăмăр. Платник пултăмăр. Пĕренесем ҫутлатпăр, турпассем вĕҫеҫҫĕ. Пăҫкă кĕрписем пулаҫҫĕ,—аван!..

Такам каланă хуҫана епĕр платник ĕҫне тин вĕренме пуҫлани ҫинҫен. Хамăр йал шуйтанĕсемех килсе каланă пулмалла. Пĕр виҫ-тăват кун ĕҫлекенĕ хыҫҫăн, хуҫа пире:

— Сирĕн ĕҫ латлă пулмасĭ. Ҫыпăҫуллă мар. Ал-урусем хытса ларнă сирĕн. Мĕн тума ҫак пĕренене ҫакăнтан касмалла пулнă-ха. Пĕрене мурĕсем!—тесе харкашма пуҫларĕ.

Харкашмаллах харкашаĭ.

— Ăна ҫилĕмпе ҫыпăҫтарма пулаĭ, тетпĕр хамăр.

Ним каласа та ĕненмест. Такам суйине ĕненнĕ. Пилĕк кун ĕҫлесен ултăмĕш кунне ĕнселесех кăларса йаҫĕ пире. Укҫине те памарĕ. Тупата!

Телей пулмарĕ. Пилĕк кун хушшинҫе платник йатне илтсе пурăннă хыҫҫăн, ултăмĕш кунĕнҫе киле таврăнмалла пулҫĕ. Шăпи пирĕн ҫавăн пек пулĕ, тетпĕр.

Мулкаҫă айăплă!.. Конешнă вăл!.. Ара платник хатĕрĕсем илме кайнă ҫухне пĕр мулкаҫ лаша умĕн йăнк анҫах ҫула урлă каҫса карĕ. Ăҫтан те-

## Пушӑ ҫуртӑн пушӑ пуҫлӑхӗ.

Вӑрнарти вуламалли ҫурт пуҫлӑхӗ ҫынсенҭен тарса ҫӳрет. Ҫынсем хӑй патне пырасран, алӑкки ҫине: „входить нелзя" тесе ҫырса хунӑ. Хӑй, ҫырма та пӗлмест. П. И.




— Мӗншӗн ку пушӑ вуламалли ҫурта вуламалли ҫурт тесе йат панӑ?

— Вывӗски пуртан. Вывӗскине вулама пулаҭ.

лей пулаҭ вара унта? Конешнӑ пулмасҭ. Мулкаҭ каҫса кайнӑ хыҫҫӑн:

— Мӗнле капла — мулкаҭ каҫса кайни ырра мар теҫҫӗ, терӗ Ҫитӑр.

Епӗ:

— Пустуйа мари вӑлӑ. Унӑн ҫулӗ ҫавӑнтан пулнӑ пулӗ, терӗм.

,,Ҫавӑнтан" пулнӑ ҫав. Пире усал тӑвасшӑн ҫавӑнтан иртсе кайнӑ. Мур кайӑкӗ! Хам ухутник пулсан... ҫутҫанталӑкри мулкаҭсене пӗтӗмпех вӗлерсе пӗтӗрмелле... Анҭах унта та телей пулас ҫук—ҫул урлӑ мулкаҭ каҫса кайсан, мулкаҭ тытасси те пулас ҫук. Телей кирлӗ-ӗ! Телейсӗр, конешнӑ, тислӗк тасатма кайнӑ ҭухне те ҫул урлӑ мулкаҭ каҫса кайӗ.

МАМИ.

## Шупашкарта тул ҫӑнӑхӗ ҫук пирки.

Шупашкара тул ҫӑнӑхӗ ҫителӗклӗ килсе тӑманран, тухтӑрсем хура ҫакӑр ҫиме хушман ҫынсем, Шупашкартан тулӑ ӳсекен вырӑнсене тухса шӑвӑнма шутлаҫҫӗ. Пӗр пин ҫын кайсан, хваттер тӗлӗшӗнҭен пурӑнма аван пулаҭҭӗ.

Пуҭнитсӑсенҭе, шур ҫӑкӑр ҫук пирки, ҫынсем хӑвӑртрах сывалса киле кайма пуҫларӗҫ, тет. Тухтӑрсене ҫӑмӑллӑх пулаҭ ӗнтӗ. Пурҫӑҫ ҫӑмӑлланнӑ майӗпе, малашне тухтӑрсем Ҭӑваш республӗкӗнҭен тухса тарма прахӗҫ-ши хуҭ.

Тул ҫӑнӑхӗ ҫук майӗпе, Шупашкарти сутуилӳ оркӑнӗсенҭе пушӑ мӑйӑхсем (михӗсем) нумай выртаҫҫӗ. Вӑл пушӑ мӑйӑхсем йурӑхсӑра тухнӑ отҭотсене тултарса хума питех те кирлӗ пулаҫҫӗ.

Тул ҫӑнӑхӗ ширанӑ майпа сутуилӳ орканисатсисенҭе ӗҫлекенсем ерни ернипе командтировккӑра ҫӳреҫҫӗ. Командтировккӑра прахут ҫинҭе ҫӳренӗшӗн, тӗрлӗ хулари номӗрсенҭе укҫа тӳлесе пурӑнса патшалӑха пуйтараҫҫӗ. Усӑллӑ йапала.

Кӑҫал тул ҫӑнӑхӗ ҫителӗклӗ пулнӑ пулсан, Ҭӑваш Сутуилӳ Комиссариаҭӗ килес ҫул та ҫӑнӑх кӳмелли плансем тума вӗренес ҫукҭӗ. Кӑҫал план тума вӗренет пуҭ, тетпӗр.

П. В.

## Вӑрман ӳстерекенсем.

— Кӑҫал сирӗн «Вӑрман кунӗ» лайӑх иртри?

— Лайӑх иртертӗмӗр. 30 йӑвӑҫ вӑрмантан кӑларса, ҫырмасене лартрӑмӑр.

— Лайӑх ӳрӗҫи?

— 30 хунав йумана ҫирӗпреххисене лартнӑ кунах касса килсе карта тытрӑмӑр та, ӳсеймерӗҫ.

Микула Ваҫлейӗ.




### Типпе тухнă пулăсем.

Çамрăк шăлĕсемпе ăслăлăх ђулĕсене кышлакан студентсен, Шупашкара килсен, ăслăлăх ђулĕсене кышлас вырăнне, ахаԓ ђулсене кышламалла пулнă.

Ак вĕсем:

Химĕк стутентăн—Ђăвашпроисвотсойусра çĕтĕк-çурăк склађĕн саветуйушђийĕ пулмалла лулнă,,пĕр механнĕк—Комунпайĕнђе сђеттовота кĕнĕ, тепĕр технĕк—-Сывлăх Комиссариатĕнђе телопроисвотиттĕлте ĕçлет.

Кашни хăй вырăнĕнђе ĕçлет: Сывлăх Комиссариатĕнђи технĕке телопроисвотствăна технĕккă йенђен пӳрократтисăм патне çывхартас тĕлĕшпе ĕçлеме хушнă, Комунпайне кĕнĕ механнĕк сђетовотствă ĕçне машшинлат̆ат̆, Происвотсойусри химĕк—çĕтĕкçурăксенђи пылђăксене (тусансене) шăршласа сăмса витĕр химиђђĕски реакси туса кăларат̆. Аван практĕккă!

### Çĕнĕ саспали.

ХаԓХи вăхăтра кам ăслă пулас тет, ђăваш ђĕлхи ваԓђи çĕнĕ саспалли шухăшласа кăларма тăрăшат̆.

Мускавпа Хусан хушшинђи ђукун çул çинђи Вăрмар йатлă стантсăра çĕнĕ саспалли шухăшласа кăларнă. Саспаллине пурте курса вулађђăр тесе, стантсăри ваксал тăррине улăхтарса хунă (вывĕскă çапнă). Ак вăл:

| | |
|---|---|
| Урмары | ВĂРМАР |

Вăл вывĕска витре сăрлакан вырăссем çырнă. Вывĕска çыртараканни хăй те витре сăрлаканскер пулмалла,—ђăваш ђĕлхине варалама йурат̆ат̆. Çынăн ăс-хакăлĕнђен килет çав вăл.

### Комсомолĕссен ђирĕ.

Шупашкар вулăсĕнђен пире çапла çырса пĕлтереççĕ:

Çĕнйалти комсомол йађейкки, йађейккă çыруçи Шупашкара куç сыватма кайнăранпа нимĕн те ĕçлемерĕ. Кайран икĕ комсомолĕс куçпа ђирлерĕç те, ханша ĕçсе урам тăрăх киревсĕр йурăсем йурласа çӳрерĕç. Йађейккăри активиссем çакăн çинђен шухăшласа пăхасшăн мар пулмалла, теççĕ икĕ йалкор.

Йалкор йулташсем! Мĕншĕн есĕр йађейккăри активиссем çавăн çинђен шухăшласа пăхасшăн мар, тетĕр. Вĕсем шухăшласшăн пулĕ те, анђах шухăшламалли аппаратсăр мĕнпе шухăшлăн ĕнтĕ.

### Тул çăнăх çукшăн.

Кĕвĕçекен çынсем нумай çав Шупашкарта. Пĕри çырат̆:

Шупашкарта тул çăнăхĕ çук. Тухтăр шур çăкăр çиме хушнă çынсем ваԓђи те çук, тет.

Хм! Çăнăх çук. Тул çăнăх кӳрекенсен пуçĕсенђе мими те çук пулмалла та, анђах вĕсем сирĕн пек кĕвĕçмеççĕ.

### Сасăсăр ђухăн çын.

Тор йатлă кореспотент çапла çырат̆:

Хурамал йалĕнђи йалсовет (Патĕрйел у.) Пешир Иванĕн Каçукне Çĕрпӳри çĕвĕç шкулне кĕме пит лайăх утостоверени панă. Утостоверени çине çапла çырнă: вăл ђухăн çын ывăлĕ, тенĕ. Ђухăн çын ывăлĕ мар вăл, унăн ашшĕ кулак пирки суйлав правине çухатнăскер. Мĕнле пăхат̆ çакăн çине „Капкăн“ тус?—тет.

Хăвăрах кураттăр—„Капкăн“ ун çине йĕплĕ çăмахăн вĕçĕсем витĕр пăхат̆.

# Çĕр кастарҫĕç... валеçрĕç те.

I.

Ик-виç çул хушши çĕр кастарас тĕлĕшпе тĕпĕртетнĕ хыççăн, Мăнал вулăсĕнҫе пулнă йалсем çĕрсене уйăрса пĕтерҫĕç. Çав шутах Ҫантăр та Иавăшран çĕрне кастарса илҫĕ.

Тек-с тесе каларĕ тет.

— Çĕр кастарса илтĕмĕр ĕнтĕ тесе Ҫантăр хресҫенĕ хура, лаптак сухалне тăрăххăн йар-р шăлса илҫĕ.

— Çĕр кастартăмăр, тесе пĕҫĕк аҫасем те йăкăлтти-йакăлтти сиксе илҫĕç.

Ку çи йенҫен. Халĕ шал йенне пăхăпăр.

— Ну аҫасем, Иавăш лашисене пирĕн çĕр çине ан каçарăр. Как каçнă, тытса кĕрĕр.

Пысăк наккассемпе Ҫантăр хресҫенĕсем вырăма кайакан аҫисене ăсатса йараççĕ.

Ытти-хĕтти тарам та выҫăхсем вĕт çĕр кастарса илни çинҫен пĕлмеççĕ. Те Иавăш хресҫенĕсем хăйсем те вĕсен лашисем çĕр кастарса илни çинҫен пĕлменнине ҫухласа илеймен, те ҫухласан та аҫисене вырма кайнă ҫухне:

— Астăвăр, Ҫантăр ҫиккинҫе лашасем Ҫантăр çĕрĕ çине каçса ан кайҫҫĕр, тесе калама маннă. Иавăш лашисем те çарана çитнĕ те, халиҫҫенхи майпа, Ҫантăрпа Йавăш хушшинҫе мише йуписем пуррипе çуккине пăхмасăрах ҫикĕ урлă каçса кайнă. Ҫантăрсем такçанах Иавăш лашисем каçасса кĕтсе тăнă.

Лашасене тытрĕç.

— Йĕвенсем ăçта сирĕн?

Иавăш аҫисем тата те пĕҫĕкрех пулнă, çерçисем пек тăр-р-р, йĕвенĕсене пăрахса тарнă.

Лашасене... йĕвенĕсене пуçтарса кайаççĕ те, Ҫантăрсем, Иавăшсем пырасса пăхмасăрах йĕвен сутса 10 тенкĕлĕх ĕçсе йараççĕ.

— Ҫикĕ урлă каçнă тăк каçнă, тӳлес пулаҭ, тесе Иавăшсем йăвашшăн Ҫантăртан тухса кайаççĕ.

II.

Йавăшра. Халăх какăлтатаҭ. Сутас, сутас тени анҫах илтĕнет.

— Миçе ҫетвĕрт паран?

— Пĕр ҫетвĕрт.

— Тепĕрне хушан пуҫ?

— Хамăр çынсем вĕт, хушас та пуҫ.

Икĕ Иавăш хресҫенĕ Иавăш халăхĕнҫен икшер ҫетвĕртпе çуршар теçеттин илеççĕ.

— Иапăх çĕр. Ĕçсе йулас çĕр валеçнĕ хыççăн, тесе калаçса лараççĕ каскасем çинҫе Иавăш хресҫенĕсем. Капла питĕ лайăх, укçа та пулҫĕ, ереке те...

— Тата ҫĕрĕк теçеттин ытлашши йулҫĕçке, ăна кам илет?

— Хам илем.

— Мĕн ҫул паран?

— Ҫетвĕрт. Мана пĕр ҫетвĕртле йураҭ пуҫ тетĕп халăх? Есĕр епĕ каланине пĕлеттĕр пуҫ, тетĕп.

Камши вара ку питĕ ҫаплă çын? Леш... хайхи. Пĕлместри? Власăв... комсомол йаҫейккин çекреттарĕ.

Власăв ал çапса пĕр ҫетвĕртле ҫĕрĕк çĕр илҫĕ.

Халăха та савăнăç, Власăва та савăнăç.

Савăнăç хыççăн... мĕн?

ПИНЕР.

---

# Çĕр упполномоҫҫĕнĕн




**кашни кунхи „кун йĕрки“.**

# Кам ку?

(«Капкӑн» туса асӑнса).

Пӗрре епӗр Ленинкратра, йерҫнӗ кун каҫхине, вырӑс йулташсемпе:— ӑҫта кайса вӑхӑта аван, усӑллӑ, канӑҫлӑ иртерме пулӗ-ши, тесе шухӑшласа пуҫа ҫӗмӗрсе тӑтӑмӑр.

Пӗри: театтӑра кайнине ҫитес ҫук, тесе астарах.

Вара тепри: театтӑрта мӗн унта? Айтӑр, аҫасем, луҫҫӑ хамӑр клупа! Епӗр унта вӑхӑта театтӑртинҫен темӗн ҫухлех аван иртерме пултаратпӑр, тесе путарса хураҡ.

Тата виҫҫӗмӗшӗ: Ҫӑнахах! Епӗр унта ҫав «Пекемота», «Кӑркатила», «Ҫмехаҫа»*), тата вӗсем йышшисене урӑххисене тӗл пулсассӑн, ытла та вӑхӑта савӑнӑҫлӑ иртерме пултаратпӑр, тесе кӑшкӑрса хураҡ те, пирӗн пуҫсене хӑй йенелле ҫавӑраҡ. Епӗр вара клупала вӗҫтеретпӗр. Пирӗн клупа пыни, пайана ирттерех пулҫӗ пулас: халӑх сахал, мӗн пурӗ те пӗр ик-виҫ ҫын «Смехаҫ» ҫаварӗнҫен пӑхса кулса ахлатса лараҫҫӗ. Тата вӗсенҫен инҫех те мар сӗтел хушшинҫех „Пекемот“ мӑшласа, тӗлӗрсе лараҡ.

Пирӗн аташса пынӑ сасӑсемпе вӑранҫӗ. Кӑштах, епӗр килнӗрен пулас, кӑмӑлланҫӗ те пирӗнпе йумахлама пуҫларӗ.

Вӑл тӗрлӗ „мӑнӑ“ ҫынсенҫен, тирекгӑрсенҫен, раснӑй саветуйушҫисенҫен нумай тӑрӑхласа пире култарҫӗ.

— Есӗ вӗсене тытсан мӗн тӑватӑн, тесе ыйтрӑм.

— Алла кӗрсен, мӗн тумаллине пӗлетпӗр, тесе шанлаттарса ҫышрӗ сӗтел ҫине, хӑйӗн пӗрене пек аллипе. Сӗтелӗ ҫӑтаймасӑр ҫӑтӑртаттарса йӑнӑшса карӗ.

Ҫак вӑхӑтра йарр! алӑк уҫӑлса карӗ. Кӗрсе тӑҫӗ алӑкран: пӑхсан та хӑрамалла, курсан тармалла, пӗр сӑнсӑр питсӗр хӑрушӑ кайӑк. Унӑн ҫаварӗнҫе, ҫукмар пек, пысӑк ҫӗлӗм усӑнса тӑраҡ.

Ҫӗлӗмне хӑйӗн пӑҫӑкӑ пек шӑлӗсемпе ҫыртса хунӑ та, тутипеле вӑрахӑн пӑклатса тӗтӗм кӑлараҡ. Тата унӑн хул хушшинҫе тимӗр сенӗк вӗҫӗ курӑнса тӑраҡ. Ҫак кайӑкӑн хӳри авал Кӗтерин патша майрин тулетир арки пек, вӑрӑмӑн сӗтӗрӗнсе пыраҡ.

— „Кӑркатил“, тесе пурте унӑн ҫинелле пӑхса хаваслан҆ҫӗҫ.

Ҫак хайхи „Кӑркатил“ кӗрсессӗн пире пурне те телей сунҫӗ. Кайран Мускаври пурӑнӑҫ ҫинҫен, тата ытти кукӑр макӑрти кӗтессенҫи мыскарасене калама тапратса карӗ. Сӑмах-йумах ҫавӑрӑнӑҫ майӗпе ҫак хӑйӗн сенӗкне ҫӑмах вилкки пек ҫӑмӑллӑн ҫавӑркаласа, иртӗнсе пурӑнакансене ваҫҫи хатӗр, тесе мухтанса илет. Епӗр сисмен те, тата пӗр хресҫен йевӗрлӗ тумланнӑ ҫын кӗрсе тӑнӑ.

— А-а-а, „Лапаҡ“ мое вам, тесе хӑшӗсем ӑна алӑ пама тытӑнҫӗҫ.

Ҫак „Лапаҡ“ тенӗ хресҫенӗн ҫурӑм ҫийӗнҫе пӗр мӑшӑр ҫӑпата ҫакӑнса тӑраҡ.

— Мӗн йапала тата ку санӑн?

— Мӗн?.. Мӗн йапали... путсӗрсене ҫармалли хатӗр. Кулаксене, тата ҫавӑн пек ҫын мӑйӗ ҫинҫе ларакансене ҫак ҫӑпатапа ҫаварса ҫапса йарӑнтарса йаратӑп, тесе хӑйуллӑн уткаласа малалла иртсе ларҫӗ.

— Ӑҫта „Пусоҡор“?

— Темӗншӗн вӑрахӑн ҫӳрет ҫав... вӑхӑтра никҫан та килеймест, тесе лараҫҫӗ тепӗр кӗтесре.

Ҫак „кайаксем“ пире питӗ нумай мыскарасем туса култарҫӗҫ.

Вӗсем пӗринҫен пӗри ӑмӑртса мухтанса хитре йумах-сӑмахсем каласа тӗлӗнтерҫӗҫ.

Ҫак вӑхӑтра манӑн „Капкӑн“ аса кӗрсе карӗ.

— Ех! ҫакӑнта „Капкӑн“ пулсассӑн мӗнле илем пулӗҫҫӗ-ши? Култарма та пӗлӗҫҫӗ, мухтанма та пултарӗҫҫӗ. Иумах-мыскарасене те каласран тытӑнса тӑмӗҫҫӗ. Тата хӑйӗн шат тӑвакан капкӑнне кӑтартса тӗлӗнтерме пултарӗҫҫӗ.

Ҫылӑхсӑр ҫын шухӑш ҫинех ҫитет теҫҫӗ. Алӑк шӑлт-шалт уҫӑлса хупӑнҫӗ. Иапӑрт-йапӑрт алӑкран пӗр йашӑ кӗрсе тӑҫӗ.

— Кам ку?

Хӑйӗн ҫирӗп сассипеле:

---

*) «Кӑркатил», «Ҫмехаҫ», «Пекемот», «Пусоҡор»—Мускавпа Ленинкратра вырӑс ҫӗлхипе тухакан шурналсем.

— Ăста çакăнта ҫăваш аҫи Кĕркури Унтрийĕ, тесе ҫĕнҫĕ.

Епĕ „Капкăн“ сăнне тата унăн сассине уйăрса илтĕм те ҫупса ытăм.

— Ех, ҫунăм!—тесе ыталаса ҫуптуса илҫĕ мана „Капкăн“ тус.

— А-а! йуратнă пиҫҫесем мĕнле ҫупкалаттăр, кайăксем тупăнкалаççĕ-и?—тесе, леш «Пекемот», «Кăркатил», «Лапăт», «Смехаҫсене» алă парса та тухрĕ çĕнĕ хăна «Капкăн».

— Кам-ши ку?—тесе нумайĕшĕ ыйтма хăйаймасăр пăшăлтатса лараççĕ.

— Пире пурне те паллаť, епĕр паллаймарăмăрха кăна тесе мăшлатса лараť лешĕ «Пекемоҫĕ» те.

Леш хăйуллăрах «Кăркатилĕ» çеç кайса:

— Кам есĕ, калаха?—тесе тӳррех «Капкăнтан» ыйтрĕ.

Вара «Капкăн» çапла каласа паҫĕ:

«Епĕ хире тухсассăн
Тискер кайăк шикленет,
Иала пырса кĕрсессĕн
Кулак ҫунĕ сиккелет.
Кам-ши епĕ?
Мĕн йатлă? Пĕлĕр!..

— «Капкăн» тесе пăштах «Лапăт» хăлхинҫен пĕлтертĕм. Анҫах ăнланаймарĕ пулас, «Капкăн» тесе каласа хурăймарĕ.

Епĕ вара тăрса, пурне те илтмелле çапла каларăм:

— Çакă сирĕн умри çамрăк ҫипер аҫа «Капкăн» йатлă пулаť. Вăлă ирĕклĕ ҫăваш халăхĕн пĕртен-пĕр йуратнă ывăлĕ. «Капкăн» вăл ҫухăн çынсен тусĕ, кулаксем пек тискер çынсен хайар тăшманĕ, терĕм. Хамăн тус „Капкăн“ çинҫен татах нумай каласа тăкас тесеҫҫĕ, анҫах халăх шавлама пуçларĕ.

„Капкăнран“ ҫăваш пурăнăçĕнҫи мыскарасене каласа пама ыйтма пуçларĕç. Вара „Капкăн“ туртăнса тăмарĕ.

Пуçласа карĕ йумах-сăмахсене шăрантарма. Итлекенсем „Капкăн“ çăварĕнҫен çеç пăхса лараççĕ. Епĕ те „Капкăн“ çав тери халапсене кастарнине илтсессĕн, ĕлекхинҫен нумай çăвĕҫленнĕ тесе тĕлĕнсе тăтăм. Нумайĕшĕ „Капкăн“ мыскарисенҫен вар ыратаҫҫенех ахлатса кулса ларҫĕç.

Çапла вара „Капкăн“ пурне те тĕлĕнтерҫĕ.

А. КРИ—ĔВ.

## Турă çине шанакан.



— Мĕн акатăн?

— Ыраш.

— Мĕншĕн тикĕс акмастăн?

— Аксан турă аллине паратăп. Турă тикĕслĕ-ха.

Куркай.

## ҪĔННИ.

**Йăван-Муҫи** („Капкăн“ ретакси) „Хĕрлĕ Ҫăваш“ ваҫҫи **5 тенкĕ** паҫĕ. Йероплан ваҫҫи 5 тенкĕ çумне нуҫ хушса (50 тенкĕ) çак йулташ маррисенҫен укçа сăптăрса илме ҫĕнет: 2-3-4-5-мĕш расретлă паттент илнисенҫен, паттентсăр сутă тăвакансенҫен, арман хуçисенҫен, хуликансенҫен, растратҫăксенҫен (килти пурлăхсене сутса), ерех кӳпекенсенҫен, сăмакунккă пĕçерекенсенҫен, тата ытти „Капкăна“ çывăх тăракан çынсенҫен пуринҫен те.

# Йуман сысна айӗнђе.

Илйински вӑрманлӑхӗн пуҫлӑхӗ И. В. Никкиттӗн, хӑйне пӑхма хушнӑ вӑрман хуҫайствине лайӑх тытса пырас вырӑнне, сысналанса кайнӑ, тет. «Канашран».



Ђӑваш сысни айӗнђе
Йуман хӑрма тапратнӑ.
Анђах пӗрре ҫу кунђе,
Силленме вӑл тытӑннӑ.

Крылов поетӑн сыснине
Йуман ҫинђи пӗр ҫӑхан:
— Пархатӑрсӑр!—тенине,
Ҫак сысна та илтмен мар.

Анђах уншӑн ним те мар:
Ку сыснана сутӑйе те
Тӑватӑ хут сут тунӑ,
Уншӑн Вӑрман пайӗ те

Пин тенкелӗх штрав панӑ.
«Крокотилпа» «Патрак» та,
„Трутовойпе“ „Канаш“ та
Вӑл сыснана сирмен мар.

Сысна лайӑхах хӑртаҭ,
Ахӑлтатсах нӑрклатаҭ.
„Капкӑн“ лартсан мӗн пулӗ—
Мӗн пулӗ те мӗн килӗ.

# Шартлаттарать.

Есӗр вулӑр „Капкӑн“ туссем,
Ҫака манӑн сӑввӑма,
Рифмӑ, ритмӑ хитрех маршӑн
Ан йатлаҫӑр-ха мана.
Ҫуталӑпӑр.

Халӗ хӑш пӗр мушиксем те
Ҫутта тухса карӗҫӗ
Арӗмсене калитлесе
Кӗҫ уйӑрса йараҫҫӗ
Ҫутта тухрӗҫ.

Йашшисем те ӑслӑланҫӗҫ
Хывӑх лартсах ытас ҫук,
„Илеп“ тесе пурӑнаҫҫӗ те
Патне ҫитсен тараҫҫӗ,
Ӑслӑланҫӗҫ.

Хӗрӗсем те йуласшӑн мар,
Кунран кунах ҫуталаҫҫӗ.
Ҫӑвар карса ҫӳрекене
Иут сӑмахпа паллаштараҫ.
Ҫутта тухрӗҫ.

Шӑлсӑр ватӑ карҫӑксем те
Пӗлмесӗрех пурӑнмаҫҫӗ,
Антихристӑ килнӗ тесе
Открыттисем тӑваҫҫӗ.
Ӑслӑланҫӗҫ.

Сутанасӑр стариксем те
Ҫуталасран инҫех мар-ха:
Куҫа «трахвим» йерсессӗн те
Иумӑҫаллах ламсаҫҫӗ
Ҫутта тухрӗҫ.

Хӑш пӗр йалти аҫасем те
Хастарланса карӗҫӗ,
Улт-ҫиҫ ҫулта пулсассӑн та,
Ҫӗлӗм туртма пӗлеҫҫӗ.
Ӑслӑланҫӗҫ.

Пӑрҫататӑлӗ тенисем те
Хӑш-пӗрисем ҫуталаҫҫӗ.
Пӗрре кӗрсе выртаҫҫӗ те
Вҫаткӑран та вӑтанмаҫҫӗ.
Ҫуталаҫҫӗ.

Уҫрештенин сӗм вӑрманҫе
Йӗркесем те наҫарах мар:
Хресҫен ӗҫне пырсассӑн та
Ыран килсе пӑхха теҫҫӗ.
Йӗркеленҫӗҫ.

Туй тусан та хӑш ҫамрӑксем
Арҫурилле сиккелеҫҫӗ,
Самакункӑ кӳпеҫҫӗ те
Алтансем пек вӑрҫаҫҫӗ.
Ҫутта тухрӗҫ.

Хаҫхи поҫтӑ текенни те
Хастарлансах пырать-ҫке,
Виҫӗ кунта ҫитес хута
Виҫ уйӑхсӑр леҫмеҫ-ҫке!
Кахалланҫӗҫ.

АТТАЙ М.

## Хӑтара.



**Хӗр ҫураҫма килнисем**: Хӑта, килнӗ майӗпе хӗрне курсах кайасҫӗ пирӗн.

**Хӗр ашшӗ**. Машук, пӳрте кӗрсем, мӗн тулта именсе тӑратӑн. (Машук кӗрет).

**Пулас упӑшки**. Аван хӗр, аван. Иатламалла мар. Ну, хӑта, кала мӗн ҫухлӗ илес тен ку хӗршӗн хулӑм укҫи.

**Хӗр ашшӗ**. Мӗн мӗн ҫул илесси... 50 тенкӗсем параттӑр пулӗ.

**Пулас упӑшки**. Ей, хӑта, йурӑхсӑра калаҫан ҫав есӗ. Ҫӗнӗ ҫулта манӑн йулташ хӑй арӑмӗшӗн 30 тенкӗ ҫеҫ хулӑм укҫи паҫӗ. Ун арӑмӗ сан хӗртен нимӗн те кайа мар. Ҫӗн ҫултан вара пур йапала хакӗ те, 10 проҫҫӑн ӳкнӗ. Есӗ те 27 тенкӗпе паранах пулӗ ӗнтӗ.

П. В.

# Куккук 10 авӑтрӗ, алӑкӗ уҫӑлмаст̆.

Иалти хресҭенсем саккун котексне мӗнне пӑхмасӑрах ҫиҭ-сакӑр сехет тӗлнелле Шупашкарти советӑн „поҭ-нитсине" пухӑнма пуҫлаҫҫӗ. Килтен, ҫуран йапала, паллах, тата маларах тухаҫҫӗ. Вара, ҫиҭ-сакар сехетрен пуҫласа 9 сехете ҫитиҭҭен пуҭнитса картишӗнҭе, пуҭнитсан кӑритурӗсенҭе, алӑксем патӗнҭе кӗтсе выртаҫҫӗ.

Кӗтнӗ вӑхӑт ҫитет. Уҫӑсемпе ҭанкӑртаттарса, алӑк йар уҫӑлса кайат̆ те, сирӗн ума шурӑ „сарапан" тӑхӑннӑ ҫын тухса тӑрат̆.

Майпен сӗтел кутне пырса ларат̆. Майпен шкапне уҫат̆, майпен ҭернил илет, унтан ...майпен... кӗнеке, майпен ҫырма пуҫлат̆.

— Санӑн йату мӗнле?

— Валерий.

— Слушӑшҭи?

— 4 уйӑхри аҭа.

— Тепри.

Тепри пырса тӑрат̆. Ҫапла пӗтӗм ҫынсене ҫырса пӗтерет те, каллех прийомнӑйӑн алӑкӗ хупӑнса ларат̆. Ахаҭ ҫеҫ мар, ҫӑраланса...

10 сехет—алӑк уҫӑлмаст̆. 11 сехет — алӑк татах уҫӑлмаст̆.

Варвиттине йернӗ аҭасем йӑнӑшма, макӑрма пуҫлаҫҫӗ. Вӑйсӑрланса ҫите пуҫланӑ ватӑ ҫынсемех аран-аран ахлатма пуҫлаҫҫӗ. Куҫ ҭирпе пынисем вырӑн сарсах пусмасем айне комнӑтсем тӑрӑх харлаттарма пуҫлаҫҫӗ.

— Вӑн пӗр сехет ҫур. Алӑк уҫӑлмаст̆.

Ҭирлӗ ҫынсем выртакан пӳлӗмсенҭен тухса враҭсем варкӑшма пуҫлаҫҫӗ. Пурте утаҫҫӗ. Таҫта кайма васкаҫҫӗ.

Хутран-ситрен хӑшӗ те пӗри шыв пирки те пулин тулашма пуҫлаҫҫӗ.

— Итлеха сторӑш, мӗншӗн есӗр вӗретмен шыв ӗҫтереттӗрха?

— Вӗретмен шыв? Ҫӑл шывӗ вӗт вӑл шыв, Атӑл шывӗ мар, варах аптӑратмӗ.

— Иепле вара аптратмӗ? Епӗ ҭӗр шыв ӗҫме пӑрахни 4 уйӑх ҫитет ӗнтӗ, ман ӑна мӗнле ӗҫес?

— Е-е! Хресҭен пулса курман пулӗха есӗ. Хресҭенсем хаҭхи вӑхӑтра ӗнтӗ таҫти шыва та ӗҫеҫҫӗ. Ӗҫес килсен лупашкари шыва та ӗҫӗн.

12 сехет ҫапрӗ. Прийомнӑй алӑкӗ те уҫӑлҭӗ. Прийом пуҫланҭӗ.

Аҭасем макраҫҫӗ. Ваттисем йӑнӑшаҫҫӗ. Враҭ тулашат̆.

— Меском, мӗн астӑватӑн есӗ! Пайан ман прийом мар, каллех епӗ прийома тухрӑм. 12 сехет ҫитнӗ, прийом тин пуҫланат̆... 10-рах пуҫланмалла.

— Мӗн тӑвас тен-ха?

ПАВЛӐВ 2.

# Йалти пушарпа кӗрешес ӗҫ.



— Санӑн тӑрпу (мӑрйе) шӑтӑкҭӗ. Йусарӑни?

— Ӗнер анҭах сӳс тӗвипе шӑтӑкне мӑкласа антӑм. Хӑпарса пӑхсан та тӑрпа ҫумӗнҭе шӑтӑк тупаймӑн.

## ӐС ПАНИ.

**Ыйту.** Ҫӗнӗ Ушкӑн-Атпкассинҭи (Аттай вул.) йалканаш ҫыруҫин кашни кунах ўсӗр ҫўреме йўраҭ-и?

Шӑпӑр.

**Ответ.** Иураҭ. Анҭах ӑна йалканаш ӗҫӗсенҭен хӑтарас пулаҭ, ахалӗн унӑн ӗҫме вӑхӑт пулмӗ.

**Ыйту.** Шукассинҭи (Ентрийел вул.) кӗтўҫӗн йалта ўсӗрӗлсе ҫынсене хӗнеме йураҭ-и?

Мӗнле ҭармалла?

Шук-ка.

**Ответ.** Хирте выҭӑхсене хӗнеме вӗреннӗскерӗн йалта та алли кӗҫтет пуҭ.

Хӗнеҕенсене ҭармалли Уколовни Котекӑс йатлӑ кӗнеке пур, ҫав кӗнекепе пуҫӗнҭен аҭашласан хӑйех ҭарӑнаҭ.

**Ыйту.** Шупашкарта вырӑн тупма май пур-ши? Калаха «Капкӑн»!

Торинкасси йалканашӗ.

**Ответ.** Ҫу вӑхӑтӗнҭе Шупашкарта вырӑн нумай: Атӑл хӗринҭе те ирӗк, хула урамӗнҭе те ҫӗр каҫма пулаҭ, тата лашапа килсен хула тулашӗнҭех аван, анҭах пӗртак вӑрӑм-тунасем аптратаҫҫӗ. Уҭрештенисенҭе вырӑн тупма хӗнтерех.

---

## КОРЕСПОТЕНТСЕНЕ.

**Шепире** (Аттай вул.). Партйаҭейккӑн ҫыруҫи, ҫынсемпе калаҫнӑ ҭухне, сӑмаха сутӑн илсе калаҫаҭ, тетӗн. Мӗн ҭул параҭ вӑл кашни сӑмахшӑн. Сутма епӗр те пултаратпӑр. „Капкӑнӑн“ сӑмах нумай.

**408№** (Хоса касси, Упи вул.) Пулӑшком сӗллине никамран ыйтмасӑрах хӑй патне илсе кайнӑ комиттет пуҫлӑхӗ ҫинҭен халӑхран ыйтса пӗл: акаҭши претҫетаттӗл ҫав тырра, йе унтан салат тӑваҭ.

**Ҫӑлтӑра** (Хӗрлӗ-Ҭутай вул.). Мӑн-Хӑмӑркка йалӗнҭи Шур Хветӗрӗн килӗрен-киле куҫса ҫўрекен пўртре йухтармалли аппарат пур, тетӗн. Сирӗн килӗрен-киле куҫса ҫўрекен „Капкӑн“ туйанмалла. Усӑллӑ йапала.

## Хуйхӑ.



— **Кин, мӗншӗн йӗретӗн?**

— **Йӗрмесӗр. Упӑшкам вулӑса хӗрарӑмсен пуххине карӗ. Хӗрарӑмсем хушшинҭе ӗҫлетӗп, тет. Мана пӑрахаҭ ӗнтӗ вӑл.**

**М. А-в.**

---

## Сатаҭ туппи.

«Капкӑнӑн» 13-мӗш №-ӗнҭе ҫапӑннӑ сатаҭ туппине шыраса тупакансем сахал пулҭӗҫ. Пӗтӗмпе икӗ ҫын шыраса тупнӑ: Кирилл И. Толинӑв (Туҫ вул., Мӑнйал Хапӑс), тата Ваҫҫилйӗв (Шурҭа в.).

**Туппи ҫапла**: Мӑн ҫынсем 11 пулнӑ, саниттар комиҫҫи ҭленӗсем 8, аҭасем 81.

# Командировккӑран таврӑннӑ хыҫҫӑн.




— Сылтӑм аллӑм отҌот ҫырма кирлӗ, сулахайӑн — суйа роҫпискӑсем ҫырма... Тӑнпуҫ пур ман, тӑмпуҫ!...

Ответ. редактор **А. Золотов**.

Чувашлит № 1959 Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.